26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
3
ЭРНЕКУН
238(6475) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

И. ЧАРЫКОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ

Мĕнпур вăя тырă сутăн илес ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ çĕре хурар

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй аслă вăрçă çакна кăтартса пачĕ: пирĕн çĕршывăн тылĕ халь нихăçанхинчен те çирĕпрех. Пирĕн тыл фронта кунран кун вăйлăнрах пулăшса пырать. Совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени,—тенĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнин çинчен тунă докладĕнче,—халăх хăйĕн Тăван çĕршывне хӳтĕленĕ çĕрте калама çук паттăр ĕç тунине кăтартса, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, историе кĕрсе юлать.

«Мĕн пурĕ фронт валли, мĕн пурĕ тăшмана çĕнтермешкĕн!»—çак лозунгпа ĕçлет пирĕн пĕтĕм халăх. Çав лозунгпа ĕçлесе, пирĕн çĕршывра кĕске вăхăтрах Хĕрлĕ Çарăн фондне питех те нумай укçа пухнă, Военнăй заема çырăннă. Çав лозунгпа ĕçлесе, халь вăрçăпа хуçалăх тата политика тĕлĕшĕнчен питĕ паха пулса тăракан задачăна — государство валли тырă сутăн илес ĕçе пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

Тырă сутăн илес задачăран пахарах, кирлĕрех задача халь парти организацийĕсен урăх çук, мĕншĕн тесен халь çĕршыва тырă, танксемпе самолетсем пекех, боеприпассемпе хĕçпăшалсем пекех, питĕ кирлĕ. Тырăсăр эпир тăшмана çĕнтерес çукки пуриншĕн те паллă. Тырă пирĕн çĕршыва хамăр тăшмана çĕнтермешкĕн кирлĕ.

Çакна асра тытса, малта пыракан колхозсем, ялсенчи активистсемпе стахановецсем обществăллă фондсенчен тата хăйсен перекетленĕ тырринчен государствăна 10—12-шер пин пăт сутрĕç. Вăрнар районĕнче кăна хатĕрлев пункчĕсене тырă 100 пин пăт ытла илсе пынă ĕнтĕ. Çав районри колхозсемпе колхозниксем государствăна 150 пин пăтран кая мар тырă сутма тата çав тырра хатĕрлев пункчĕсене декабрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр леçсе пама сăмах панă. Пĕтĕм республикипе илсен, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне заготзернопа потребитель кооперацийĕн склачĕсене 1 миллион пăт ытла тырă леçсе панă.

Республикăри пур колхозсенче те тенĕ пекех государствăна тырă сутма йышăннă. Анчах çакă малашне ĕç тип-тикĕс пырассине, чăрмавсем пулас çуккине пĕлтерет-и? Çук, пĕлтермест. Сутнă тырра заготзернопа потребитель кооперацийĕн склачĕсене ăнăçлăн турттарса пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн республикăри парти организацийĕн нумай ĕçлемелле пулать-ха. Государство валли тырă сутăн илмелли кампание кăтартуллăн вĕçлемешкĕн пирĕн мĕнпур вăйсене — партипе комсомола, советсемпе хуçалăх организацийĕсен мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелле пулать.

Чăваш республикинчи нумай колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетлесе усранă тырăран государствăна темиçе вуншар пăт сутнă. Ытти ĕçсенчи пекех, патриотизмлă çак пысăк ĕçре те коммунистсемпе комсомолецсем, колхозсен чи лайăх председателĕсемпе бригадирĕсем, фронтовиксен арăмĕсем, ватă колхозниксем пример кăтартса параççĕ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ, çемьинче 6 çын пулсан та, государствăна хăйĕн тырринчен 105 пăт сутнă. Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Краснов юлташ тата Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ Маркиянов юлташ хăйсен тырринчен государствăна çĕршер пăт сутнă. Çак чаплă ĕçсем çинчен пирĕн хаçатсенче çырса пĕлтернĕччĕ. Советски районри «Первое мая» колхозри колхозница Тимофеева (унăн упăшкипе ывăлĕ Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçаççĕ) тата Вăрмар районĕнчи «Ударник» колхозри 82 çулхи рядовой колхозник Васильев государствăна 44-шар пăт тырă сутнă. Вăрнар МТС-ĕн трактористки Елизавета Арсентьева хăйĕн тырринчен государствăна 150 пăт сутнă. Советски, Етĕрне, Вăрнар, Елчĕк, Вăрмар тата ытти районсенчи нумай коммунистсем-колхозниксем хăйсен запасĕнчен государствăна 30-шар, 40-шер пăт тата ытларах та тырă сутнă.

Ялсенчи мĕнпур парторганизацисен задачи — ялсенче малта пыракан çынсен пуçарăвне малалла ӳстерсе пырасси, государствăна тырă сутас ĕçе мĕнпур колхозниксемпе единоличниксене хутшăнтарасси пулса тăрать.

Ялсенче агитациллĕ-массăллă тата организациллĕ ĕçе тĕплĕн йĕркелемелле. Сăмахпа агитацилесси, хаçат-журналсем, радио, — çаксен пурин те халь государство валли тырă сутăн илмелли плана ăнăçлăн пурнăçлассишĕн тăрăшмалла. Государствăна сутнă тыррăн кашни пăчĕ — вăл тăшмана пырса çапни пулса тăнине, эпир тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартнине кашни колхознике ăнлантарса памалла.

Государствăна тырă сутма йышăннипе ĕç вĕçленет тесе шухăшлама юрамасть, апла шухăшлани йăнăш пулать. Пĕтĕм сутнă тырра часрах элеваторсене, хатĕрлев пункчĕсене леçсе памалла. Пирĕн çĕршыва тата хамăр тăван çĕршывшăн, хăйсен ачисемпе тăванĕсемшĕн юн юхтарса çапăçакан паттăр боецсене, фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларнă, анчах та çурт-йĕрсĕр, апат-çимĕçсĕр тăрса юлнă çынсене резолюцисем кирлĕ мар, вĕсене тырă кирлĕ. Çавăнпа та сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçессине пĕр куна та хăвармалла мар. Районсенче колхозсен руководителĕсен халех пĕр пăркаланмасăр тумалли задачи — сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçмешкĕн колхозри пĕтĕм транспорта, чылай колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилесси пулса тăрать.

Хăшпĕр тĕлте элеваторсене ăсатакан тырра вăрлани те пулнă. Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозри колхознике Григорьева хатĕрлев пунктне 8 центнер тырă леçсе пама хушнă пулнă. Çул çинче вăл 100 килограмм тырă вăрланă, тырă пани çинчен калакан квитанцие пăсса çырнă. Çав вăрра халь тăрă шыв çине кăларнă, ăна хытă айăплĕç. Анчах ытти районсенче те çавăн пек ĕçсем ан пулччăр тесе кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Нумай тĕлте хатĕрлев пункчĕсемпе элеваторсем хăйсем патне илсе пыракан тырра йышăнма начар хатĕрленнĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, çак ыйтăва сӳтсе-явса, Заготзерно управляющине Минаев юлташа тырă илекен пунктсене пĕр чарăнмасăр ĕçлетерме хушрĕ. Халь мĕнпур хатĕрлев пункчĕсен талăкĕпех ĕçлемелле, илсе пыракан тырра хăвăрт йышăнмалла. Хатĕрлев пункчĕсен, потребитель кооперацийĕнче ĕçлекен работниксен тырă турттарса пыракан колхозниксем ăшă пӳрте кĕрсе ăшăнма пултарччăр, унта апатланма, чей ĕçме, хаçат вулама, агитаторсемпе калаçма пултарччăр тесе тăрăшмалла.

Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсен хатĕрлев пункчĕсен ĕçĕсемпе кулленех интересленмелле, вĕсене ĕçре пулăшса пымалла. Парти райкомĕсен задачи — хатĕрлев пункчĕсене ĕçе лайăх пĕлекен агитаторсем тата вĕсене куллен пулăшса тăракан уйрăм уполномоченнăйсем уйăрса парасси.

Халĕ районсенче тырă сутакансене тĕрлĕ таварсем сутас ĕçе организацилес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. Тырă сутакансене сутмалли таварсене часрах магазинсене çитерес тесе республика организацийĕсем кирлĕ мерăсем йышăннă. Тăвар, краççин, сахăр, супăнь, пусма таварсем тата ытти йышши таварсем те республикăна килеççĕ, вĕсенчен пĕр пайĕ ырăнсене çитнĕ те ĕнтĕ. Потребитель кооперацийĕн хăйĕн ĕçне çакăн пек организацилемелле: государствăна тырă сутнă колхозсем тата колхозниксемпе единоличниксем хăйсене тивекен таварсене пĕр чăрмавсăр илме пултарччăр, çав таварсем ытти çĕре ан кайччăр. ВКП(б) райкомĕсен çав таварсене тĕрĕс валеçсе хумалла çеç мар, вĕсене тата тырă сутнă çынсем патне часрах çитермелле тăвас пулать.

Государство валли тырă сутăн илес ĕçе тĕрлĕ сăлтавсемпе витĕнсе чăрмантарма хăтланакансене вăхăтра сирсе ямалла, вăхăтра ответ тыттармалла. Канашри хатĕрлев пункчĕн работникĕсем тунă преступникла ĕçсем çинчен хаçатсенче çырса пĕлтернĕччĕ.

Тырă сутăн илес ĕçе чăрмантаракансем, государствăна улталакансем, тырă сутăн илес тĕлĕшпе йышăннă плана пурнăçлас ĕçе пăсакан çынсем Отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче пирĕн тăван çĕршывăн чи усал тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Çав тăшмансене хирĕç чи хаяр мерăсем йышăнас пулать.

Тăшмана çĕнтерес ĕçре государство валли тырă сутăн илесси, тырă хатĕрлевĕ пекех, питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Пирĕн çакна яланах асра тытса тăрас пулать: халĕ вăрçă пырать. Вăрçă вăхăтĕнче тырă сутăн илес ĕçе вăрçăри пек хăвăрт та организованно тăвас пулать, тăван çĕршыв умĕнчи, фронт умĕнчи хамăрăн пысăк ответлăха туйса тăрса ĕçлес пулать.

Мĕнпур вăя тырă сутăн илес ĕçе вĕçленĕ çĕре парар!

Çĕнтерӳшĕн

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Юлашки вăхăтра районри ĕççыннисем хушшинче массăллă-политикăллă ĕç палăрмаллах вăйланчĕ. Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладĕ çак ĕçе çĕнĕ çĕкленӳ кӳчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем фронтри ĕçсемпе, тĕнчери лару-тăрупа ытларах интересленме пуçларĕç. Ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕмĕт кашни ĕççыннине кулленхи ĕçре хастарлантарать.

Колхозниксемпе колхозницăсен интересĕ ӳснине шута илсе, районри пĕтĕм парторганизаци массăллă-политикăллă ĕçе хутшăнчĕ. Кашни ялсоветнех районри партипе совет активĕнчен уйрăм çын кайнă. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн историллĕ докладне тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Хальхи вăхăтри политикăллă ыйтусем тăрăх калаçусем ирттереççĕ, ĕççынниссене çĕнĕ хаçатсем вуласа параççĕ. Кашни колхозрах стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларас ĕçе организацитенĕ.

Районри ертсе пыракан работниксем колхозсенче хальхи политика ыйтăвĕсем тăрăх докладсем тăваççĕ.

Хальхи вăхăтра районри парторганизаци пĕтĕм массăллă-политикăллă ĕçе колхозниксен патриотла çĕнĕ юхăмĕпе—государствăна тырă сутас ĕçпе çыхăнтарса пырать. Çине тăрса ĕçлени сая каймасть. Районри колхозсен тата колхозниксемпе колхозницăсен государствăна план тăрăх 94 пин пăт тырă сутмалла пулнă пулсан, паянхи кун тĕлне çав плана чылай ирттерсе тултарнă. Халĕ сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕç пырать. Паянхи куна пĕтĕмпе 30.000 пăт леçсе панă. Ку ĕçе чылай хăвăртлатмалла-ха. Пĕтĕм сутнă тырра колхозсем хатĕрлев пункчĕсене срокченех—декабрĕн 7-мĕшĕ тĕлне леçсе парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Уйрăм колхозсем хăйсем сутнă тырра государство аллине панă та ĕнтĕ. Пăчанарти пысăк мар колхоз, государствăна 1220 пăт тырă сутса, ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Чакăнарти «Парижская Коммуна» колхоз тата унти колхозниксем, государствăна 6710 пăт сутса, 2440 пăтне хатĕрлев пунктне турттарса пынă. Çак колхозăн председателĕ Зыбин юлташ государствăна 30 пăт, колхоз бригадирĕ Смекалов юлташ — 24 пăт, кладовщица Осипова юлташ—24 пăт, 70 çулхи Захарычев колхозник 21 пăт сутнă.

Ватă колхозник Захарычев юлташ колхозниксен государствăна тырă сутас ыйтупа пулнă пухăвĕнче хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

— Ман ывăл-фронтовик тăшмана хăвăртрах тĕп туса киле çĕнтерӳпе тазăрăнтăр тесе, эпĕ хамăн тырра государствăна сутатăп. Манăн çак пысăк мар парне фронтри паттăрсене ытларах вăй кӳтĕр, — терĕ вăл, пĕтĕм колхозниксен шухăш-кăмăлне палăртса.

Çапла ĕççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе лайăх йĕркелени колхозниксемпе колхозницăсен патриотла пуçарулăхне ӳстерсе пырать, вĕсене пирĕн государствăн пысăк задачисене пурнăçа кĕртме мобилизацилет.

С. МАКАРОВ.

Государствăна тырă сутас ĕçе вĕçлени— аслă Сталин чĕннине чи лайăх ответ пани пулать

ТРАКТОРИСТКА АРСЕНТЬЕВА 150 ПĂТ СУТРĔ

КАЛИНИНО, декабрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна 160.000 пăт тырă сутрĕç. Вăл шутран 55.146 пăт хатĕрлев пунктне леçнĕ. «Первомайски», Киров тата Папанин ячĕсемпе тăракан колхозсем сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă. Ун пек колхозсем вуннăран та иртеççĕ.

Государствăна тырă сутас ĕç халĕ те хĕрӳллĕн пырать. Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Николаев юлташ малтан 20 пăт тырă сутнă, халĕ татах 25 пăт сутрĕ. Калинино районĕсенчи колхозсенче ĕçленĕ Вăрнар МТС-ĕн трактористки Елизавета Арсентьева 150 пăт сутса, çапла каларĕ:

— Эпир тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулма тивĕçлĕ мар. Хамăрăн çĕнтерӳшĕн нимĕн те шеллеместĕп. Пĕтĕм вăй-хала фронта, тăван çĕршыва пулăшнă çĕре паратăп,—тет çамрăк патриотка.

Арсентьева юлташ хăй сутнă тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Р. ГРИГОРЬЕВА.

Колхозник Спиридон Семенов 60 пăт сутнă

СОВЕТСКОЕ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсемпе колхозниксем ку таранччен государствăна 116.590 пăт тырă сутнă. Вăл шутран 30.000 пăтне колхозниксемпе колхозницăсем сутнă. Нумай колхозниксем темиçе вуншар пăт сутаççĕ. Çапла, «Новая победа» колхоз членĕ Спиридон Семенов юлташ 60 пăт, «Первое мая» колхоз членĕ Ф. Иванов —50 пăт, Пелагея Волкова—44 пăт сутнă. Кун пек примерсене нумай илсе кăтартма пулать.

Чылай колхозсем государствăна сутнă тырра çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе параççĕ. «Первое мая» колхоз государствăна сутнă 1.330 пăт тырра пĕтĕмпех леçнĕ. Анчах та район сутнă тырра хатĕрлев пункчĕсене леçес тĕлĕшпе кая юлса пырать-ха. Уйрăмăнах Васькино, Тойгильдино тата ытти ялсоветсенчи колхозсем сӳрĕк ĕçлеççĕ. Сутнă тырра йышăнас тĕлĕшпе тата тырă сутнăшăн колхозниксемпе колхозницăсене промтоварсем парас тĕлĕшпе райсоюз та çителĕксĕр ĕçлет-ха.

П. НИКИТИН.

Павлов колхозник 50 пăт тырă сутрĕ

ЭЛĔК, декабрĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «Триер» колхозри И. Павлов колхозник кăçал пур ĕçре те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. «Хамшăн та, ывăлшăн та пултăр», тет вăл. Унăн ывăлĕ фронтра, тăшмана хирĕç геройла çапăçать. Павлов колхозник хăйĕн ывăлне, тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшма тăрăшать. Çак шухăш-кăмăлпа вăл хăй перекетлесе хăварнă тырăран 50 пăт государствăна сутрĕ.

М. ФЕДОТОВ.

ЛАВ ХЫÇÇĂН ЛАВ...

Шап-шурă юр, вĕр-çĕнĕ юр
Лапкам-лапкам ӳкет тӳлеккĕн.
Урампала лавсем йĕркеллĕн
Шăваççĕ, кур, пин лав та пур!

Вĕсем йăлтах тулли лавсем,
Караван пек иртсе пыраççĕ
Патриотсем-колхозниксем
Патшалăха тырă сутаççĕ

Тапса турттаççĕ лашисем,
Çăмăл пулин те çуна çуле
Кун хыççăн кун васканăçем
Лав хыççăн лав куçать тыр-пулă.

— Часрах çĕнесчĕ нимĕçе,
Вăл пирĕн çĕр çинче ан уртăр!
Эпир сутан кашни пĕрчех
Тăшманшăн вутлă пуля пултăр!

Тăшман ан тухтăр çав вутран,
Тĕппех çунса тĕппех вăл пĕттĕр!
Фронта — тыр-пулă хăвăртрах,
Фронта хăват пулса вăл çиттĕр!

Шап-шурă юр, вĕр-çĕнĕ юр
Лапкам-лапкам ӳкет тӳлеккĕн.
Урампала лавсем йĕркеллĕн
Шăваççĕ, кур, пин лав та пур!

Иван МАЛГАЙ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ Шупашкарти армачта колхозсемпе колхозниксем государствăна сутнă тырра йышăнассине тата складсенче пăхса усрассине мĕнле организацилени çинчен сӳтсе-яврĕ.

Совнарком Шупашкарти армапта çав ĕçе пачах та çителĕксĕр туса пынине палăртрĕ. Колхозниксем тырă йышăнасса кĕтсе черетре нумай тăраççĕ. Столовăйсен трестĕпе Чебторг колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç çине çиелтен пăхнă. Вĕсем, Совнарком хушнă пулсан те, ку таранччен чайнăй тата столовăй уçман. Колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе туса пыма шанчăксăр çынсене лартнă.

Совнарком Чăваш АССР апатçимĕç халăх комиссарĕн заместительне Игнатьев юлташа, вăл Шупашкарти арманта тырă йышăннă чухне йĕркесĕрлĕхсем пулни çинчен пĕлнĕ пулсан та, çав çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăнманшăн асăрхаттарса хăварчĕ тата ăна тырă йышăнас ĕçе халех йĕркене кĕртме хушрĕ.

Тырă йышăнас, тырра складсенче пăхса усрас тата тырă леçме пынă колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе начар ĕçленĕшĕн, колхозсемпе колхозниксенчен 15,5 процент таран нӳрлĕхлĕ урпана йышăнма кăтартса панине пурнăçа кĕртменшĕн Мельтрест управляющине Апанасова—ятласа хăварнă, Шупашкарти арман директорне Бочкова хыттăн ятласа хăварнă тата вĕсене тырă йышăнас, колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçри çитменлĕхсене 5 кун хушшинче пĕтерме хушнă.

Чебторг директорне Судаков юлташа тата столовăйсен тресчĕн директорне Жирнов юлташа икĕ кунран кая юлмасăр тырă йышăнмалли пунктсенче чайнăйсемпе столовăйсем уçма хушнă.

Шупашкар хула совет исполкомĕн председательне Аникин юлташа хула территорийĕнчи тырă йышăнакан пунктсенче йĕркелĕх тума, çавăн пекех тата колхозниксен ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатма хушнă. Çак ĕçе тума хула совет исполкомĕнче ĕçлекен работниксемпе хула совет депутачĕсене явăçтармалла.

СУТНĂ ТЫРРА ДЕКАБРĔН 5-МĔШĔЧЧЕН ЛЕÇСЕ ПĔТЕРЕТПĔР

ÇĔРПӲ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пирĕн районри ĕççыннисем фронта ытларах пулăшас шутпа, пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем çак кунсенче 135.155 пăт, вăл шутран колхозниксем 27.047 пăт государствăна сутрĕç. Ку ĕçе 7.360 колхозник хутшăнчĕ.

Енер районра колхозсемпе ялсовет председателĕсен канашлуне ирттертĕмĕр. Унта «Шумашар», «Чуваш ЦИК», «КИМ», «Красный герой» колхозсен председателĕсем сăмах тухса каларĕç. «Шумашар» колхоз председателĕ Ильин юлташ, государствăна малтан 30 пăт тырă сутнăскер, халĕ татах 10 пăт сутма пулчĕ. Çавăн пекех ытти колхоз председателĕсем те хушса тырă сутма, сутнă тырра декабрĕн 5-мĕшĕччен хатĕрлев пунктне леçсе пама сăмах пачĕç.

Халĕ колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр хатĕрлев пунктне тырă турттараççĕ. «Чуваш ЦИК» колхозран кашни кунах 15—30-шар лав хатĕрлев пунктне тырă леçеççĕ. Çавăн пекех «Цивильстрой», «Красный герой», «Богатырь» колхозсем те сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ.

Эпир мĕнпур вăя çак ĕçе мобилизацилесе, сутнă тырра декабрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлев пунктне леçсе пĕтеретпĕр.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пĕр кун хушшинче 7.380 пăт тырă

КАНАШ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Çак кунсенче государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçес ĕç уйрăмăнах лайăхланчĕ. Район государствăна тырă сутмалли плана ытлашшипех пурнăçларĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 110.105 пăт сутнă, хатĕрлев пунктне 46.826 пăт леçнĕ. Колхозсенчен хатĕрлев пунктне тырă тиенĕ лавсем кашни кун ытларах та ытларах килсе тăраççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче 7.380 пăт тырă килчĕ.

«Красное пламя», «3-мĕш пятилетка», Киров ячĕпе тăракан колхозсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе пĕтернĕпе пĕрех.

А. САМОЙЛОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче СОЖПА ДНЕПР шывĕсем хушшинче, ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн контратакисене сире-сире ярса, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — РЕУТ, ДОРКИ, РОЗОВ, ПОЧКИ, МИХАЛЕВКА, ТАЛЫ ятлă ялсем.

ДНЕПРПА БЕРЕЗИНА шывĕсем хушшинче — ЖЛОБИН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса темиçе ял тытса илнĕ.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçнă, ЗАМОСТЬЕ, ЛОЗКИ, КРЫШИЧИ, ЮРЕВИЧИ, ГРЯДА, ГУТА, ЗАРАКИТНОЕ, КНУРОВКА ялĕсене тытса илнĕ.

Верховный Главнокомандовани хушнă тăрăх, пирĕн çарсем КОРОСТЕНЬ хулине хăварнă, хӳтĕлеме меллĕрех позицисем йышăннă.

ЧЕРКАССЫ хули районĕнче пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн тăшманран вăйлă çирĕплетнĕ ТАБУРИЩЕ, ЗАХАРЬЕВКА, РАЗРОПОЛЬ, ЯНОВ, БОЛЬШАЯ МАКАРИХА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман контратакисене сире-сире янă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 99 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

ДЕКАБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем СОЖ шывĕпе ДНЕПР шывĕ хушшинче, ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, темиçе ял тытса илнĕ, вăл шутра — Полесье облаçĕнчи НАРОВЛЯ ятлă район центрне.

ЧЕРКАССЫ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ ВЕЛИКАЯ СКЕЛЕВА, МАЛАЯ СКЕЛЕВА, МИРОНОВКА, КРАСНОУРАЛЬСК, НОВО-ПОКРОВКА, ЮЛКАНОВКА, БАНДУРОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă — тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çĕрлле перекен артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хушăри позицисенче хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, темиçе ял тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ тĕввипе усă курса, вăйлăн хирĕç тăнă. Совет боецĕсем тăшмана çавăрса илнĕ те, флангран тата тылран пырса çапса, аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 700 виллине çитиччен выртса юлнă. Тепĕр участокра пĕр соединени чăсĕсем 3 ял тытса илнĕ. Нимĕçсенчен 18 тупă, 49 пулемет, 7 миномет, снарядсем, минăсем тата винтовка патронĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Припять шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем çапăçса малалла куснă. Пĕр соединени чăсĕсем каçусемшĕн хаяррăн çапăçнă хыççăн Припять шывĕ урлă каçнă та Полесье облаçĕнчи Наровля ятлă район центрне тытса илнĕ. Тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă чăсĕсене хăваласа пырса, пирĕн боецсем тата темиçе ял тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Чылай гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Черкассы хули районĕнче пирĕн çарсем Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Кун каçиччен нимĕçсем хăйсен пехотин пысăк вăйĕсене тата танкĕсене темиçе хутчен те контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерийĕ тăшманăн 26 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕç салтакĕсен 3 ротине çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн летчиксем, çĕр çинчи çарсене пулăшса пырса, сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 16 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, вăйлă çирĕплетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Пĕр участокра тăшманăн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем хăйсен унччен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме хăтланнă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе нимĕçсем каялла чакса пынă, анчах та, вăйсем пухса, çĕнĕрен контратакăсем тунă. Совет боецĕсем кун каçиччен 15 контратакăна сирсе янă, нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 16 танкне 2 бронемашинине, хăй тĕллĕн çÿрекен 6 туппине, 2 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата артиллерипе миномётсен темиçе батарейине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсемпе техники пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахнипе пула темиçе танк, 100 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 8 складне тата пĕр горючи складне сирпĕнтерсе янă.

Совет летчикĕсем декабрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен Апостолово чугун çул узелĕнчи çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе чугун çул çинчи 2 поезд сирпĕнсе кайнă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ ноябрĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшне çитиччен нимĕçсен 15 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 9 паровоз тата çарсем, артиллери, боеприпассем, ытти çар хатĕрĕсем те турттарса пыракан 180 вагонпа платформа ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Нумай гитлеровецсем вилсе е аманса пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинчех Ленинград облаçĕнчи партизансем чугун çулсемпе шоссе çулĕсем çинче 43 кĕпере сирпĕнтерсе янă, 36 километр тăршшĕ телеграфпа телефон линине татса тухнă.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чăсcем нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизине пысăк çухату кÿнĕ, çав дивизири нумай салтаксене тыткăна илнĕ. 203-мĕш полкри 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Людвиг Габиншаден çапла каласа кăтартнă: «76-мĕш пехотнăй дивизие Францире Сен-Назерта организациленĕ. Муссолинине сирпĕнтерсе янă хыççăн пире Итали Генуя хулине илсе кайрĕç. Итальянецсем пирĕн çине тăшман çине пăхнă пек пăхатчĕç. Нумайĕшĕ пире тÿрех çапла калатчĕç: Итали тÿсекен йывăрлăхсемшĕн пурниншĕн те Муссолинипе нимĕçсем айăплă, тетчĕç. Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче дивизне сасартăк Хĕвелтухăç фронтне илсе килчĕç».

Хăйĕн взвочĕпе пĕрле Хĕрлĕ Çар енне каçнă лейтенант Карл Н. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ кунта Италирен 76-мĕш пехотнăй дивизийĕн юлашки эшелонĕпе килтĕм. Ноябрĕн 8-мĕшĕнче эшелон Знаменка станцийĕнче вагонсем çинчен анчĕ. Малтанхи çапăçусенчех эпир вырăссен артиллерийĕн, танкĕсен тата пехотин вăйне тÿссе куртăмăр. Артиллери пени салтаксене хăратса тĕлĕнтерсе ячĕ, пирĕн оборонăна йĕркерен кăларчĕ. Пуриччен ытла 178-мĕшпе 230-мĕш полксем пысăк çухатусем тÿсрĕç. 178-мĕш полкăн штабне аркатса тăкрĕç. 230-мĕш полкран тарса ÿкнĕ салтаксем кăна чĕррĕн юлчĕç. Офицерсем çапла калаççĕ: çавăн пек пысăк çухатусем хыççăн дивизи часах вăрçма юрăхсăр пулса ларать, теççĕ. Украинăра нимĕç салтакĕсем çав тери нумай пĕтнине кура эпĕ çакна ăнланса илтĕм: ку вăрçăра Германия аяла пулса юлчĕ. Манăн взводри салтаксем те çаплах шухăшлаççĕ иккен, вара эпир тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсемпе пĕрле мирлĕ совет çыннисене хăваласа каяççĕ. Хăваласа пыракан нимĕç салтакĕсем çав совет гражданĕсен мĕнпур хаклă япалисене, апат-çимĕçне туртса илеççĕ те вĕсене выçă вилĕмпе вилмелле тăваççĕ. Унтан та ытларах, çакăн пек фактсем пулса иртнине палăртнă: нимĕç ирсĕрĕсем хăйсен тăван хулисемпе ялĕсенчен нимĕçсен тылне вăйпа хăваласа каякан ачасене, халран тухнă арçынсемпе хĕрарăмсене вĕлереççĕ. Минск облаçĕнчи Борисов хулинче нимĕçсем тĕрлĕ районран ирĕксĕр хăваласа кайнă мирлĕ совет çыннисем нумай пухăннă. Ноябрь уйăхĕн варринче нимĕç влаçĕсем çав çынсене темиçе ушкăна уйăрма пуçланă. Ĕçе юрăхлă арçынсемпе хĕрарăмсене гитлеровецсем Германие каторгăна янă. Ĕçе юрăхсăррисене, вăл шутра пĕчĕк ачасене те, нимĕç çынçиенĕсем пере-пере пăрахнă. Икĕ кун хушшинче кăна — ноябрĕн 15-мĕшĕпе 16-мĕшĕнче — Борисов хулинче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем 840 совет çыннине вĕлернĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ стариксем, ачасем тата чирлĕ çынсем пулнă.

Осоавиахим организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла

Çак кунсенче осоавиахим работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура осоавиахимăн республикăри организацийĕсем мĕнле ĕçлени çинчен Осоавиахимăн Чăваш АСС Республикинчи Центральный Совечĕн председателĕ Чурбанов юлташ доклад туса пачĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă осоавиахим работникĕсем умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Ĕççынинсене вăрçă ĕçне вĕрентесси осоавиахимăн тĕп задачи пулса тăрать. Çак задачăна осоавиахимăн Шупашкар хулинчи работникĕсем чыслăн пурнăçласа пычĕç. Анчах та хăшпĕр районсенче осоавиахим ĕçне кирлĕ пек туса йĕркелемен-ха. Комсомольски, Йĕпрес, Вăрмар, Первомайски районсенче ку ĕç уйрăмăнах сÿрĕк пулса пырать. (Вĕсенче ПВХО, ГСО значокĕсен нормисене парас ĕçе ял-ти нумай ĕççыннисене явăçтарман. Йĕпрес районĕнче, сăмахран, халăха вăрçă ĕçне вĕрентмелли плана 57 процент кăна пурнăçланă.

Халăха ПВХО ĕçне вĕрентме общественлă инструкторсем хатĕрлесси те начар пулса пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах осоавиахимăн Куславкка тата Канаш районĕсенчи совечĕсем япăх ĕçлеççĕ. Осоавиахимăн Канаш районĕнчи совечĕн председателĕ Бескровный осоавиахим ĕçне лайăхлатас енĕпе нимĕн те тумасть. Вăл районра вăрçă ĕçне вĕрентмелли миçе кружок ĕçленине те пĕлмест.

Канашлу осоавиахимăн Чăваш АССР Центральный Совечĕн вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕ (начальникĕ Киселев) начар ĕçленине палăртрĕ. Халăха вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе сезонлăх пулмалла мар, ăна кулленех туса пымалла.

Сталинла Конституци кунĕ тĕлне

Плана срокчен тултаракан предприятисен йышĕ ÿссех пырать

УЛАТАР, декабрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари предприятисемпе артельсен коллективĕсем Сталинла Конституци кунне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ.

Хулари предприятисенчен саккăрĕшĕ 1943 çулхи плана тултарчĕç. Çапла, ноябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана махорка фабрики — 112 процент, кирпĕч завочĕ—132 процент, топливо промышленность управленийĕн вăрманпромхозĕ —172 процент, «8 марта» артель — 148 процент, «Союз инвалидов» артель —117 процент, «Красная Звезда» артель—110 процент, районри типографи—103 процент култарнă, çавăн пекех тата «Гигиена» артель те хăйĕн планне пурнăçланă. Тăватă предприяти ноябрьти плана 20 кун хушшинчех пурнăçа кĕртнĕ.

Предприятисемпе учрежденисенче халĕ Сталинла Конституци кунĕ çинчен калаçусемпе докладсем пулса иртеççĕ. ВКП(б) горкомĕ пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе агитаторсене пулăшас шутпа нумай пулмасть семинар ирттерчĕ.

Хулари рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем хăйсен ĕçĕсене пăхса тухса, çулталăкри плана пур предприятисемпе артельсем тăрăх та декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Л. КРАСИЛЬНИКОВ,
ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ.

Республикăри предприятисенчен пĕлтереççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатра производствăна поточнăй меслетпе организацилес ыйтупа инженерла-техникла работниксен тата партипе хуçалăх активĕн конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци çак çывăх вăхăтрах чылай цехсемпе отделсене поточнăй меслетпе ĕçлемелле тума йышăнса хăварчĕ.

(Хамăр корр.).

* * *

СЕНТЕРВАРРИ. Районри промысла кооперацин артелĕсенче пурăнмалли тата производство çуртĕсене хĕлле мĕнле хатĕрленине тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслÿре чылай артельсем хĕле тĕплĕн хатĕрленни палăрчĕ. «Портной», «Крестьянский кузнец», «Кооператор» артельсенче пур çуртсене те юсаса ăшăтнă, вутă çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Анчах пур çĕрте те çавăн пек мар-ха. «Деревообделочник», «Парижская Коммуна» тата «Социализм» артельсенче ку тарана çитсе те хĕле хатĕрленсе çитмен.

Г. КАРПОВ.

ВЦСПС Президиумĕ 1943-мĕш çулта рабочисемпе служащисем хăйсен уйрăм тата коллективлă пахчисенче пахча-çимĕç туса илни çинчен

Çак кунсенче ВЦСПС Президиумĕ рабочисемпе служащисене хăйсен уйрăм тата коллективлă пахчисенче пахча-çимĕç туса илме пулăшакан комитетăн председателĕн К. И. Николаева юлташăн докладне итленĕ. Николаева юлташ 1943-мĕш çулхи ĕçсем çинчен каласа панă.

— 1942-мĕш çулта мĕн пурĕ 5 миллион рабочипе служащи пахча-çимĕç туса илнĕ пулсан, — тенĕ Николаева юлташ, — 1943-мĕш çулта 11.624.144 рабочипе служащи пахча-çимĕç туса илнĕ, пахчасен çĕрĕ 500.000 гектартан 768.878 гектара çитнĕ. Рабочисемпе служащисем 1943-мĕш çулта хăйсен пахчисенче 5.480.007 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç туса илнĕ, пахчаллă кашни çемье пуçне, çапла вара, вăтамран 471,4 килограмм, урăхла каласан — 30 пăта яхăн çĕрулмипе пахча-çимĕç туса илнĕ.

ВЦСПС Президиумĕ профсоюз организацийĕсем умне, хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен питĕ паха задача тесе шутласа, çакăн пек задача лартнă: 1944-мĕш çулта пахчасен çĕрне тата ытларах ÿстермелле, пахчасенче тата ытларах çимĕç туса илме тăрăшмалла.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче уйрăм çынсен тата коллективсен пахчисен хисепне вăйлăн ÿстерсе ярас ĕç çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхма тата рабочисемпе служащисене пахчасем валли çĕр уйăрса илес ĕçре пур майсемпе те пулăшма хушнă.

ВЦСПС Президиумĕ профсоюз организацийĕсене çакăн пек ĕçсем тума хушнă: вырăнсенчи пур йышши удобренисене те нумай пухса хумалла, вĕсене тĕрĕс пăхса усрамалла; рабочисемпе служащисем хăйсен пахчисем валли вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хуччăр, апата каймалли çĕрулмин тăррисене вăхăтра касса курса, вĕсене лайăх пăхса усраччăр; колхозсемпе, совхозсемпе, подсобнăй хуçалăхсемпе тата ытти организацисемпе, рабочисемпе служащисен уйрăм тата коллективлă пахчисене лартмашкăн пахча-çимĕç калчисем ÿстерме калаçса татăлса, вĕсемпе 1944-мĕш çулхи февралĕн 1-мĕшĕччен договорсем тумалла.

ВЦСПС Президиумĕ профсоюз организацийĕсене рабочисемпе служащисене агротехникăна вĕрентес ĕçе анлăн сарса яма, вĕсене 1943-мĕш çулта чи лайăх ĕçленĕ пахча комиссийĕсен ĕçĕсемпе тата хăйсен пахчисенчен 1943-мĕш çулта нумай пахча-çимĕç туса илнĕ уйрăм рабочисемпе служащисен ĕç опычĕпе паллаштарма хушнă. (ТАСС)

Çĕрулми тăррисене пухакансен конкурсĕн итогĕсем

В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен академийĕ тата РСФСР Наркомпросĕн çамрăк натуралистсен станцийĕ çĕрулми тăррисене пухакансен конкурсĕн итогĕсене пăхса тухнă. Конкурса 570.000 ача, 6.750 шкул, облаçсемпе республикăсенчи çамрăк натуралистсен 22 станцийĕ хутшăннă. Вĕсем 18.870 центнер çĕрулми тăрри касса хатĕрленĕ, 14.240 тонна кĕл, 3525 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Пĕррĕмĕш вырăна Свердловск облаçĕнчи шкул ачисем йышăннă, иккĕмĕш вырăна Мускав облаçĕнчи шкул ачисем, виççĕмĕш вырăна Пушкăрт республикинчи шкул ачисем йышăннă.

Пĕррĕмĕш премисене Мускав облаçĕнчи Сухаревски вăтам шкула, Свердловск облаçĕнчи Северо-Коневски вăтам шкула, Омск облаçĕнчи Москаленски вăтам шкула, Молотов облаçĕнчи Кудымкарски педучилищĕне тата Горький облаçĕнчи Мало-Иголкински вăтам шкула панă.

Пĕррĕмĕш премисене 75 ачана, иккĕмĕш премисене 200 ачана панă.

Шкул ачисене конкурса хутшăнма лайăх организациленĕшĕн Свердловск облаçĕнчи çамрăк натуралистсен станцине пĕррĕмĕш преми памалла тунă.

Т. Д. Лысенко академик сĕннĕ тăрăх, çĕрулми тăррисене пухакансен иккĕмĕш конкурсĕ пулать. (ТАСС).

1500 гектар çĕр çине шыв ямалла тунă

Казах ССР-ĕнче Коктерекски районра колхозниксем халăх вăйĕпе канав тунă. Çав канав тăрăх Чусс юханшывĕн шывĕсем юхса тăраççĕ. Çĕнĕ канав тăршшĕ 35 километр. Вăл Муюнкум пушхирĕ çĕрĕсене 1.500 гектар шăварса тăрать. Ку пушхирте халĕ ку таранччен акса туман тулă, рис, кунжут тата ытти культурăсене те малтанхи хут акса тăва пуçлаççĕ.

Малалла шыв шăваракан лаптăк 5.000 гектара çитиччен аслăланать. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çара культура енчен пулăшнăшăн— Хисеплĕ грамотăсем

Мускаври искусство тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен активĕн пухăвĕнче Искусство тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн тата Искусство тĕлĕшпе ĕçлекенсен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене панă. Çав грамотăсене искусство мастерĕсене Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс Çар Флочĕн тата НКВД çарĕсен чăсĕсене культура енчен шеф йĕркипе пулăшнăшăн панă.

Вăрçă пуçланнăранпа фронтпа тылра шеф йĕркипе çур миллиона яхăн концертсемпе спектакльсем лартнă. Çав хисепрен 60.000 ытла концертпа спектакле Мускаври театрсемпе эстрадăсен артисчĕсем организациленĕ.

Шеф ĕçне пуриччен лайăхрах йĕркеленĕшĕн Оборона Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Мускава панă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕн чăсĕсем 36 сехет хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн тăшманăн Сангро шывĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри çÿллĕ вырăнсем çинчи оборонин тĕп линине татнă. Кĕпер умĕнчи çирĕплетнĕ вырăнсен территорине 12 миля анлăлатнă, шалалла 4 миля кĕрсе кайнă. 8-мĕш арми çаплах малалла куçса пырать.

Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем активлăн çапăçнă. 5-мĕш арми чăсĕсем Венафроран çурçĕрелле куçнă та Кастелькуово хулине тытса илнĕ.

ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Либера Стампа» хаçат пичетлесе кăларнă хыпарсем тăрăх, Ломбардире тата Пьемонтра Германие хирĕçле ĕçсем вăйланаççĕ. Унта нимĕçсен тата итальянецсен фашистла çар чăсĕсене тапăнаççĕ. Лайăх хĕçпăшалланнă темиçе пин итальянец Ломбардири тата Пьемонтри тусем хушшине кайса пытаннă. Çавăнтан вĕсем улăхсене анаççĕ те оккупантсене тапăнаççĕ. Германи командованийĕ Ломбардире осаднăй положени туса хунă, халăха 20 сехет иртсен урама кăлармаççĕ.

Итали предприятийĕсенчи рабочисенчен нумайĕшĕ ĕçлеме килĕшмеççĕ, предприятисем ĕççĕр ларнă пеккех лараççĕ. Çамрăк итальянецсем нумайĕшĕ тусем хушшине партизансем патне каяççĕ.

БАДОЛЬО ПРАВИТЕЛЬСТВИ КĂЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Бадольо правительстви уйрăм пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: нимĕçсем тыткăна лекнĕ итальянец офицерĕсене персе вĕлерни çинчен тĕрĕс хыпар илтрĕмĕр; çавăн пек ĕçсем Албанире, Черногорире тата Эгей тинĕсĕнчи утравсем çинче пулнă, тенĕ.

Бадольо правительстви Итали ĕçĕсем пирки тунă контроль комиссине çакăн çинчен пĕлтернĕ: тыткăна лекнĕ итальянец офицерĕсене нимĕçсем юлашки вăхăтра Лерос утравне оккупациленĕ чухне те персе вĕлернĕ, тенĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ОСЛО ХУЛИНЧИ УНИВЕРСИТЕТРА ВĔРЕНЕКЕН СТУДЕНТСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ АРЕСТЛЕНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Швецири телеграф агентствин пĕлтерĕвне сарать. Пĕлтерÿре çапла каланă: Германи полицийĕ Ослори университетра вĕренекен мĕнпур студентсене арестленĕ, квислинговецсен «партийĕнче» тăраканнисене çеç арестлемен.

Арестленисен хисепĕ 1.000—1.500 çынна çитет.

Норвегири гестапо начальникĕ Реднес генерал арестленĕ студентсене çапла каланă: Норвегие оккупациленĕ хыççăн студентсем оппозициллĕ ушкăн туса хунă, çав ушкăн Германие тата Норвеги влаçĕсене (урăхла каласан, квислинговецсене) хирĕç ĕçленĕ, Германие хирĕç пропаганда тунă. Студентсем, тенĕ Реднес, сăтăрçăсен ушкăнĕсене тата вăрттăн ĕçлекен ытти организацисене ертсе пынă, вĕсем тата вăрттăн хаçатсем кăларса тăма пулăшса тăнă.

Норвегин телеграф агентстви Ослори гитлеровецсем контроллесе тăракан информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх çапла калать: Реднес арестленĕ студентсене Германие, ятарласа тунă лагере ярасси çинчен пĕлтерсе хунă, тет.

ТУРЦИРЕ ÇĔР ЧĔТРЕНИ

АНКАРА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Турцире çĕр чĕтренĕ. Çĕр чĕтренĕ районсенче çуртсем нумай ишĕлнĕ. «Улус» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Ильгаз ятлă район центрĕнче пĕр çурт çеç тăрса юлнă. Самсунски вилайетри Везиркопро ятлă уезд центрĕнче мĕнпур çуртсен 60 процентчĕ ишĕлнĕ. Токат вилайетĕнчи Эрбаа уездĕнче малтанхи хут чĕтренĕ хыççăн тăрса юлнă çуртсем халĕ пĕтĕмпех ишĕлсе пĕтнĕ. Халăх пурăнакан ытти пунктсем те пысăк сиен курнă. Çуртсен ишĕлчĕксене тасатас ĕçе çар чăсĕсене те явăçтарнă. Сиен курнă районсенчи халăха пулăшу панă.

Тулли мар даннăйсем тăрăх, çĕр чĕтренĕ вăхăтра 600 çын ытла вилнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: декабрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă. Канада самолечĕсем ноябрĕн 30-мĕшĕнче Норвеги çыранĕсем патĕнче тăшман суднисен караванне атакăланă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем, Америкăн тата Англин истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе, Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

Америкăн сывлăш çарĕн 8-мĕш корпусĕ, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ноябрĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Хĕвеланăç Германири çар объекчĕсене атакăланă.

АВСТРИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ САРАЛНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Базлер нахрихтен» хаçат Австрирен янă статьяна пичетлесе кăларнă. Çав статьяра гитлерла оккупантсемпе Австрири халăх пĕр-пĕринпе ытларах та ытларах хирĕçни çинчен каланă.

Çав статья авторĕ çапла çырать: гитлеровецсем Австрире ытти оккупациленĕ çĕршывсенче хăтланнă пеккех хăтланаççĕ. Вĕсем Австри хуçалăхне пĕтĕмпех хăйсен аллине çавăрса илнĕ, Австрири предприятисемпе фирмăсене Германи концернĕсемпе компанийĕсен шутне кĕртнĕ, австриецсене хăйсен вырăнĕсенчен кăларса пыраççĕ, вĕсем вырăнне Германи чиновникĕсене лартаççĕ. Германирен Австрие 40.000 чиновник ытла янă. Çаксем пурте Австри халăхĕ оккупантсене тăрăхлине тата вăйлатса ярать.

Германи войскисем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче чи малтан поражени сем тÿснĕ хыççăн Вена хулинче халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсен вăрттăн пухнă конференцийĕ пулса иртнĕ. Çав конференци австриецсене Австрин никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме, çак ĕçре гитлеровецсем чуралантарнă мĕнпур халăхсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме, саботажла тата сăтăрла ĕçсем тума чĕннĕ. Конференци Германи çарне мобилизациленĕ салтаксене çав çартан тарма, тусем хушшине тарса кайма тата партизанла отрядсем тума чĕннĕ. Партизансем Штирире тата Каринтире гитлеровецсене хирĕç кĕрешнĕ те ĕнтĕ. Вĕсем гитлерла чиновниксене тата эсэсовецсене тапăнаççĕ.

Статья авторĕ тата çакна палăртать: Австрире халăхпа гитлерла салтаксем пĕр-пĕринпе час-часах тытăçа-тытăçа илеççĕ. Гитлеровецсем патриотсене хаяррăн тыткаласа, арестлесе, асаплантарса вĕлерсе Австрире саралакан Германие хирĕçле юхăма пусарса лартма хăтланаççĕ. Австриецсем валли çĕнĕ концентрациллĕ лагерьсем тунă.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Государствăна тырă сутас ĕçе хирĕç тăнăшăн Чăрăшкассинчи (Октябрьски район) колхоз председательне Анна Васильевăна çар трибуналĕ 10 çуллăха тĕрмене хупмалла приговор йышăнчĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

1944 ÇУЛШĂН

„ЧĂВАШ КОММУНИ"

тата

„КРАСНАЯ ЧУВАШИЯ"

хаçатсене çырăнса илĕр

Чăваш АССР районĕсенче тухса тăракан хаçатсене пурне те

ÇЫРĂНСА ИЛĔР.

Асăннă хаçатсене пурне те хуласенчи тата ялсенчи пур почта отделенийĕсенче, çыхăну агентствисенче тата пур почтальонсем патĕнче те çырăнса илме пулать.

СОЮЗПЕЧАТЬ.

ПОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙĔН

Взаимнăй страхованипе взаимопомощĕн Чăваш республикинчи кассине çак ĕçсене пĕлекенсем кирлĕ: çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, доверённăй врач (тата урăх вырăнта ĕçлет пулсан та юрать), оргинспектор, ача учрежденийĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер-ревизор, бухгалтер-контролерсем, çавăн пекех тата шут ĕçне ĕçлесе вĕренес текен ученниксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом 21 (здание промартели Кожупряжь). Телефон 6—79 (два звонка). 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1161 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.